17-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
АПРЕЛЬ
29
ШАМАТКУН
85(6580) №.

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Сывă пултăр вăйлă та хăватлă Совет Союзĕ—пирĕн çĕршыври халăхсен туслăхĕн, телейлĕхĕн тата мухтавлăхĕн шанчăклă тĕрекĕ! Сывă пултăр Совет çĕршывĕ!

(1944 çулхи Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе ЦК ВКП(б) чĕнсе каланисенчен)

Социализмлă ăмăртăвăн ялавне çӳлерех çĕклер!

Вунпилĕк çул каялла — 1929 çулхи апрелĕн 29-мĕшĕнче — ВКП(б) XVI-мĕш конференцийĕ Совет Союзĕнчи ĕççыннисене социализмлă ăмăртăва сарса яма чĕнчĕ.

Пирĕн çĕршыв ун чухне сталинла пятилеткăсене пурнăçлама тытăннăччĕ. Ленин—Сталин партийĕ çав аслă плансене-пурнăçа кĕртес ĕçе ĕççыннисене хутшăнтармалли хăватлă май вырăнне социализмлă ăмăртăва суйласа илчĕ.

Сталинла пятилеткăсем пирĕн çĕршывăн историйĕнче мĕнле пысăк вырăн йышăннине эпир пĕлетпĕр. Пирĕн çĕршыв техникăпа экономика тĕлĕшĕнчен историре пулман пек хăвăрт çĕкленсе пынине эпир курса тăтăмăр, çав ĕçе хутшăнса ĕçлерĕмĕр. Çав аслă ĕçе малалла ӳстерсе пынă вăйсенчен пĕри социализмлă ăмăрту пулса тăчĕ.

Ленинăн социализмла ăмăртăва сарса ярас шухăшĕ массăсен шухăшĕ пулса тăчĕ, Сталин юлташ ертсе пынипе вăл вара питĕ пысăк вăй пулса тăчĕ, вăл пирĕн çĕршыва çар тĕлĕшĕнчен хăватлă çĕршыв туса хума пулăшрĕ, çав хăвата халь фашистла нимĕç захватчикĕсем хăйсен çурăмĕ çинче тӳссе курассĕ.

Социализмлă ăмăртăва большевиксен партийĕ тата аслă Сталин пĕлсе ертсе пырассĕ, ăна халь халăх пуçарулăхĕн чаплă тĕслĕхĕсем тăтăшах пуянлатса вăйлатса пырассĕ, вăл историллĕ-стахановла движени формине йышăнчĕç. Çав социализмлă ăмăрту паян фашистла нимĕç захватчикĕсене пĕтĕмпех çĕнтерес ĕçе пулăшса тăрать.

Социализмлă ăмăрту Отечественнăй вăрçăн çак кунĕсенчи пек нихăçан та анлăн сарăлманччĕ-ха. Хальхи вăхăтра промышленносăн, транспортăн, ялхуçалăхĕн пур отраслĕсем те, пирĕн Тăван çĕршывăн чăн-чăн патриочĕсем пурте гитлерла ирсĕрсене çĕнтерес ĕçре хамăрăн Хĕрлĕ Çара ытларах та ытларах пулăшас тесе пĕтĕм вăйпа тăрăшассĕ. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухнисене—совет тылĕнчи çак чаплă гвардеецсене — пĕтĕм халăх хисеплет.

Социализмлă ăмăрту пуçланни 15 çул тултарнă куна Чăваш республикинчи ĕççыннисем станоксем умĕнче, стройкăсенче, колхоз хирĕсенче тата артельсенче фашистла нимĕç захватчикĕсене хăвăртрах çĕнтермешкĕн хăйсен вăйĕсене шеллемесĕр ĕçленипе кĕтсе илессĕ. Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавĕ орденлă Чăваш республики çинче çĕнтерӳллĕн ялкăшса тăрать. Чăваш республики 1943 çулта вăйлă тырпул туса илессишĕн хăйĕн вăйне шеллемесĕр ĕçленине пирĕн Тăван çĕршыв çав хисеплĕ наградăпа паллă турĕ. Чăваш республикин промышленносĕнчи нумай коллективсене пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура тĕрлĕ наградăсем парса паллă тунă. Промышленносри, транспортри тата ялхуçалăхĕнчи темиçе çĕр стахановеца Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă.

Май уявĕ умĕнхи ăмăрту кăçал пысăк результатсем пачĕ. Чăваш республикинче май уявĕ умĕнхи ăмăртăва чи малтан хутшăннă Куславккари комбинат мартпа апрель уйăхĕсенчи плана срокчен 5 кун малтан тултарчĕ. Апрель уйăхĕнчи плана Шупашкарти табак фабрикипе макарон фабрики тата эрех завочĕ те ăнăçлăн тултарчĕç. Республикăри пысăк тата вак предприятисем нумайĕшĕ май уявĕ умĕнхи ăмăртура илнĕ обязательствисене тултарса пыраççĕ. Пирĕн промышленность предприятийĕсенче тата транспортра ăмăртакансем, ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пырса, çав ĕçе сахалтарах рабочисемпе тума тăрăшассĕ, оборудованипе, ĕç вăхăчĕпе, чĕртаварпа, материалсемпе, электричество энергийĕпе тухăçлăрах усă курма тăрăшассĕ.

Чăваш республикинчи колхозсемпе машинно-тракторнăй станцисем Калинин облаçĕнчи «Красный путиловец» ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсем çуракинче Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва сарса яма чĕннине тивĕçлипе ответ пама тăрăшассĕ. Пирĕн республикăри нумай колхозсем, çураки ĕçĕсене кĕске срокра туса иртерме тăрăшса, хирти ĕçсене пуçĕнчĕç ĕнтĕ. Пирĕн уйрăм колхозсемпе машинно-тракторнăй станцисем Совет Союзĕнче малта пыракан колхозсемпе тата МТС-семпе ăмăртассĕ. Ĕнер эпир Мускав облаçĕнчи «Победа» колхоз Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан Кольцовка колхозне панă ответа пичетлерĕмĕр. Орденлă ялхуçалăх артелĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеме тытăнчĕç, пирĕн халăх вĕсен ĕçне тимлĕн сăнаса тăрĕ. Вăрнар МТС-ĕпе Горький облаçĕнчи малта пыракан Каменск МТС-ĕ ăмăртма тытăнчĕç. Вăрçă вăхăтĕнче вăйлă тырпул туса илессишĕн, Хĕрлĕ Çарпа çĕршыва апат-çимĕç, промышленноса—чĕртавар ытларах парса тăрассишĕн социализмлă ялхуçалăхĕнчи мастерсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеме пуçларĕç.

Ăмăрту ăнăçлăхĕ халăх хуçалăхĕнчи конвейерăн пур сыпăкĕсем те пĕр-пĕринпе чĕн чухлĕ килĕштерсе ĕçленипчен, хуçалăх, парти тата профсоюз организацийĕсем ăмăртăва мĕнле ертсе пынинчен, ăмăртакансем валли тухăçлă ĕçлемешкĕн условисем çителĕклĕ туса панинчен нумай килет. Пирĕн республикăра çакăн пек фактсем сахал мар: пĕр участок начар ĕçленине пула вара темиçе участок йывăрлăхсем тӳсет. Акă, сăмахран, Атăл леш енчи электростанцийĕсем илер. Çав станци электричество энергийĕ çителĕклĕ паман пирки питĕ кирлĕ предприятисем пирĕн çĕршывпа фронта продукци çителĕклĕ параймассĕ. Энерги бази хальхи вăхăтра халăх хуçалăхĕн тĕп ыйтăвĕ пулса тăрать, çавăнпа та электростанцисенче ăмăртăва анлăн сарса ярас ĕç çине халĕ питĕ тимлĕн çавăрăнса пăхмалла, çав предприятисен ĕçне лайăхлатмашкăн пур резервсемпе, пур майсемпе те усă курмалла. Хозяйственниксем ăмăртăва ертсе пырас ĕçре вĕсем хăйсен хуçалăхĕн малашлăхне курса тăни, продукци тумалли чи лайăх майсене пурнăçа кĕртсе пыни пысăк вырăн йышăнса тăмалла.

Ăмăрту анлăн сарăлса пытăр, унăн результачĕсене пурте пĕлсе тăччăр, пĕр результата теприпе танлаштарма май пултăр. ВЦСПС-ăн XII-мĕш пленумĕн решенийĕсене — предприятисенче «Хисеп хăмисем», «Хисеп кĕнекисем» тумалли çинчен тата чи лайăх работниксене Хисеплĕ грамотăсем памалли çинчен калакан решенисене—профсоюз организацийĕсен пурнăçа кĕртмелле. Çак ĕçсене туни цехсемпе предприятисенче ăмăртăва тата ытларах сарса яма пулăшĕ. Фашистла нимĕç захватчикĕсене тапăклăнах çĕнтермешкĕн нумай вăй хумаллине совет халăхĕ пĕлсе тăрать. Тăшмана çĕнтерес тесе, вăл хăйĕн вăйне шеллемесĕр ĕçлеме хатĕр. Социализмлă ăмăрту анларах та анларах сарăлса пырĕ, чаплăрах та чаплăрах результатсем парĕ.

Фронта хĕçпăшал, боеприпассем, снаряжени, апат-çимĕç тата ытларах парар! Социализмлă ăмăртăвăн ялавне тата çӳлерех çĕклер!

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Тырпул тухăçне ӳстернĕшĕн тата 1943 ялхуçалăх çулне ăнăçлă вĕçленĕшĕн Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас.

УЛАТĂР РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

1. Анна Степановна **Абрамовăна** — «Красный Барнаул» колхозри конюха.
2. Илья Васильевич **Атямасова** — «Красный партизан» колхозри старши конюха.
3. Алексей Александрович **Верова** — Улатăрти нефтебаза механикне.
4. Мария Егоровна **Ворожейкинăна** — Низовка ялĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан колхозри телятницăна.
5. Александр Николаевич **Гарева** — «Путь Ильича» колхозри пахча-çимĕç бригадин бригадирне.
6. Надежда Васильевна **Григорьевăна**—Знаменка поселокĕнчи «Красное знамя» колхоз бригадирне.
7. Иван Васильевич **Додонова**—«Победа Октября» колхозăн председательне.
8. Анастасия Ивановна **Душевăна** — «Путь Ильича» колхозри доярккăна.
9. Григорий Николаевич **Еремина** — «Красное Анютино» колхозри колхозника.
10. Станислав Лаврентьевич **Ижевские**—НКПС-ăн Улатăрти техникумĕн производствăллă мастерскойĕсен начальникне.
11. Ксения Матвеевна **Ионинăна** — Сталин ячĕпе тăракан колхозри доярккăна.
12. Анастасия Григорьевна **Кирьяновăна** — «Красный луч» колхозри колхозницăна.
13. Александр Горвасьевич **Киселя** — НКПС-ăн Улатăрти техникумĕн директорне.
14. Семен Трофимович **Кошелева** — машинно-тракторнăй станцири тракториста.
15. Никифор Маркелович **Кубранова** — Улатăрти нефтебазăн директорне.
16. Иван Иванович **Кулаева**—НКПС-ăн Улатăрти техникумĕн мастерскойĕнчи токаре.
17. Петр Михайлович **Лукина**—Ямской Посадри «Прогресс» колхозăн полеводне.
18. Эмиль Владиславович **Мейснера** — НКПС-ăн Улатăрти техникумĕн механически цехĕн мастерне.
19. Валентин Андреевич **Малышева** — НКПС-ăн Улатăрти техникумĕн мастерскойĕн токарьне.
20. Яков Иванович **Новикова**—Сталин ячĕпе тăракан колхозăн председательне.
21. Иван Николаевич **Панова**—НКПС-ăн Улатăрти техникумĕн мастерскойĕнчи формировщика.
22. Сергей Иванович **Пылаева**—«Красное Анютино» колхозри колхозника.
23. Надежда Ивановна **Поляйкинăна** — «Красная Мордовия» колхозри колхозницăна
24. Борис Михайлович **Полуэктова** — машинно-тракторнăй станцинчи комбайнера.
25. Пелагея Васильевна **Ребровăна** — «Путь Ильича» колхозри уйĕç бригадин звеньевойне.
26. Степан Алексеевич **Рузавина** — «Красная Звезда» колхозри колхозника.
27. Егор Анфилович **Солдатова**—машинно-тракторнăй станцин 12-мĕш тракторнăй бригадин бригадирне.
28. Мария Александровна **Титовăна** — «Путь Ильича» колхозри пуçламĕш парторганизацин секретарьне.
29. Александр Михайлович **Тяткина** — махорка совхозĕнчи тракториста.
30. Александр Андреевич **Яблонские** — «Путь Ильича» колхозăн председательне.

ЭЛĔК РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

1. Иван Алексеевич **Алексеева**—«Вите çуч» колхозри пахча-çимĕç бригадин бригадирне.
2. Ксения Артемьевна **Артемьевăна** — «Большевик» колхозăн председательне.
3. Петр Алексеевич **Бочкова**—«Доброволец» колхоз председательне.
4. Петр Федорович **Быкова** — «Труд» колхоз председательне.
5. Сильвестр Васильевич **Васильева** — Войков ячĕпе тăракан колхоз председательне.
6. Андрей Филиппович **Волкова** — районри çĕрĕç пайĕн заведующине.
7. Гурий Григорьевич **Григорьева** — Мăн Шĕвĕш ялĕнчи «Правда» колхозри старши конюха.
8. Евдокия Дмитриевна **Дмитриевăна**—Хирпуçĕнчи «Красный Октябрь» колхозри свинаркăна.
9. Елизавета Емельянова **Емельяновăна** — «Венера» колхозри сурăх пăхакана.
10. Агафия Захаровна **Захаровăна** — Питĕшкассинчи Войков ячĕпе тăракан колхозри секретарьăна.
11. Дария Игнатьевна **Золотозăна** — Сикерти Жданов ячĕпе тăракан колхозри свинаркăна.
12. Константин Иванович **Иванова** — Хурнсуртри «Пĕрлешӳ» колхозри уйĕç бригадин бригадирне.
13. Нина Ивановна **Ивановăна** — Кĕçĕн Тукташри «Сунтал» колхозри свинаркăна.
14. Филипп Капитонович **Капитонова**—«Шуçăм» колхоз председательне.
15. Александр Константинович **Карташова** — тракториста.
16. Никифор Денисович **Краснова** — Войков ячĕпе тăракан колхозри фермăсен заведующине.
17. Федора Максимовна **Кузьминана** — райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономне.
18. Семен Григорьевич **Кузнецова** — машинно-тракторнăй станцинчи тимĕрçе.
19. Евдокия Михайловна **Кульпинана**—«Новый путь» колхозри доярккăна.
20. Герман Илларионович **Кутузова** — машинно-тракторнăй станцинчи комбайнера.
21. Александр Лукич **Лукина** — трактор бригадин бригадирне.
22. Антон Мартынович **Мартынова** — «Шуçăм» колхозри сысна пăхакана.
23. Григорий Матвеевич **Матвеева** — «Броневик» колхозăн председательне.
24. Михаил Матвеевич **Матвеева** — «Комбайн» колхозри фермăсен заведующине.
25. Федор Митрофанович **Митрофанова**—трактористă.
26. Ульяна Николаевна **Мошковăна** — Вутланри «Большевик» колхоз бригадирне.
27. Никита Николаевич **Николаева** — «Трудовик» колхозăн председательне.
28. Мария Павловна **Павловăна** — «Трудовик» колхозри свинаркăна.
29. Тихон Терентьевич **Петрикова** — Сикерти Жданов ячĕпе тăракан колхозри пахча-çимĕç бригадин бригадирне.
30. Евдокия Прокопьевна **Прокопьевăна** — Максим Горький ячĕпе тăракан колхозри доярккăна.
31. Андрей Сергеевич **Сергеева** — Тимĕрçкассинчи «Прожектор» колхозри колхозника.
32. Екатерина Сергеевна **Сергеевăна** — «Звезда» колхозри колхозницăна.
33. Алексей Степанович **Степанова** — Вăрманкассинчи «Труд» колхозри конюха.
34. Григорий Степанович **Степанова** — тракториста.
35. Захар Степанович **Степанова**—машинно-тракторнăй станцин машиноведне.
36. Максим Федотович **Федотова** — ВКП(б) райкомĕн пĕрремĕш секретарьне.
37. Аристарх Федорович **Федорова** — машинно-тракторнăй станцинчи тракториста.
38. Перасковья Федоровна **Федоровăна**—Партин XVI-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан колхозри фермăсен заведующине.
39. Терентий Филимонович **Филимонова** —райсовет исполкомĕн председательне.

ВĂРНАР РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

1. Анна Александровна **Александровăна** — старши трактористкăна.
2. Филимон Александрович **Александрова** — Каганович ячĕпе тăракан колхозри колхозника.
3. Пантелеймон Андреевич **Андреева** — «Победа» колхоз председательне.
4. Алексей Николаевич **Беляева** — ВЛКСМ Вăрнар райкомĕн секретарьне.
5. Евдокия Васильевна **Боронинăна** — Вăрнарти нефтебазăн работницине.

(Малалли пулать).

Май уявĕ умĕнхи ăмăрту

Ӳкерчĕк çинче: Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри стахановка **З. М. Данилова** юлташ. Вăл завода Отечественнăй вăрçă кунĕсенче ĕçлеме кĕнĕ. Кĕске вăхăтрах слесарь профессине вĕренсе, тухăçлă ĕçлеме тытăннă. Совет правительстви Данилова юлташа «Ĕçри хастарлăхшăн» медальпе наградăланă.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Уяв парнисем

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ Н-ски заводри Кинсбургский юлташ начальник пулса ĕçлекен цех коллективĕ, май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, апрель уйăхĕнче планран ирттерсе 150 пин тенкĕлĕх продукци кăларма пулнă. Çак обязательствăна пурнăçлассишĕн кашни ĕçлекен ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет. Майăн 1-мĕшĕ тĕлне коллектив хăйĕн сăмахне чыслăн пурнăçлать.

Цехра пур рабочисем те тенĕ пекех ĕç нормине 200—250 процент тултараççĕ.

* * *

Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртекен предприятисен йышĕ кунран-кунах ӳссе пырать. Эрех завочĕ апрель уйăхĕнчи плана срокчен тултарнă хыççăн халь планран иртерсе продукци туса кăларать. Уйрăмăнах унта Пегаева юлташ ертсе пыракан цех лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Май уявĕ умĕнхи ăмăртура ĕç тухăçлăхĕ чылай ӳснĕ. Продукци хакĕ те чакнă.

* * *

Табак фабрикин коллективĕ апрель уйăхĕнчи производство планне срокчен тултарнă. Уяв умĕнхи ăмăрту вăхăтĕнче фабрика коллективĕ пирусем тăвакан производствăна аслăлатнă.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Шупашкарти поликлиникăри шăл чирĕсен врачне Н. П. Кукарникова юлташа Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе ĕçлеме тытăннăранпа 25 çул тата çуралнăранпа 50 çул тултарнă май, Шупашкарти поликлиникăри шăл чирĕсен врачне Нина Петровна **Кукарникова** юлташа Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 çулхи апрелĕн 27-мĕшĕ.

Исланди посланникĕ П. Бенедиктссон Совет Союзне килни

Апрелĕн 27-мĕшĕнче Исландин Совет Союзĕнчи Чрезвычайнăй Посланникĕ тата Полномочнăй Министрĕ Пьетур Бенедиктссон господин Мускава çитнĕ.

Аэродромра П. Бенедиктссон господина СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн Протокол Отделĕн Заведующийĕ Ф. Ф. Молочков юлташ хирĕç тухса кĕтсе илнĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АПРЕЛĔН 27-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Апрелĕн 27-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

Апрелĕн 26-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 65 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 22 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Станиславă хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнелрехре тăшман пехотипе танкĕсем тĕрлĕ участоксенче пирĕн позицисене атакăланă. Нимĕçсем совет оборонин начар тĕреклетнĕ вырăнне шыраса тупма хăтланнă, анчах тупайман. Пирĕн боецсем пур çĕрте те тăшмана персе тата хирĕç пыра-пыра çапса, ăна каялла хăваласа янă. Пĕр соединени чаçĕсем, тăшман атакине сирсе ярса, нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ, 15 танк, 4 бронетранспортер тата 20 автомашина çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ. Тепĕр районра пирĕн засадăра тăнă танксен отрячĕ атака пуçласа янă тăшмана кĕтмен çĕртен пырса çапнă. Пирĕн танкистсем гитлеровецсене каялла тартнă. Пулеметсемпе, тупăсемпе персе, нимĕç пехотине пĕр рота ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Украинăри 2-мĕш фронтăн пĕр участокĕнче пирĕн разведка тăшманăн йышлă вăйĕсем атака тума пĕр çĕре пухăннине асăрханă. Совет артиллерисчĕсемпе минометчикĕсем нимĕçсене салатса янă. Вĕсем нимĕç пехоти пĕр çĕре пухăнса тăнă вырăна вăйлăн пеме тытăннă та нимĕç пехотине пысăк сухатусем тӳстернĕ. Гитлеровецсене пĕр полка çити вĕлерсе пĕтернĕ, нимĕçсен 20 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупине ытла персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Нимĕçсем çухалса пăрахнă кайнишĕ усă курса, пирĕн боецсем вăйлă тĕреклетнĕ позицисене тытса илнĕ. Тăшмантан тĕрлĕ калибрлă 27 тупă тата боеприпассен складне тытса илнĕ. нумай çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Севастополь çывăхĕнче Хура тинĕс флочĕн торпеда яракан катерĕсен ушкăнĕ тăшманăн хăвăрт çӳрекен икĕ десант баржине атакăланă. Çав баржăсенчен пĕрне шыва путарнă.

Пирĕн авиаци тăшманăн Севастополь портĕнчи тата Хура тинĕсри суднисем çине бомбăсем пăрахнă. Кăнтăрти бухтăра бомбăсем тӳрĕ пырса лекнипе 3 баржа шыва путнă. Тинĕсре совет летчикĕсем 2 торпеда катерне тата пĕр хурал карапне шыва путарнă. Тăшманăн пĕр баржине вут тивертсе янă.

Сывлăшри çапăçусенче кун каçиччен нимĕçсен 9 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Украинăри партизансен Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа хисеплекен тăракан отрячĕ апрелĕн 14-мĕшĕнче нимĕçсен фронт патнелле кăякан çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Пĕр паровоз тата 15 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Крушени вăхăтĕнче гитлеровецсем нумай вилсе пĕтнĕ. Тепĕр отрядри партизансем пĕр-пĕринпе юнашар выртакан икĕ шоссе çулĕ çине минăсем лартса тухнă. Çав минăсем çине пырса кĕрсе, нимĕçсен 8 автомашинин тата боеприпассем тиенĕ 2 лавĕ сирпĕнсе кайнă.

* * *

Румынсен 3-мĕш горно-стрелковăй дивизийĕнчи 5-мĕш батальонăн разведка ротинчен тыткăна лекнĕ лейтенант Буня Кристя çапла каласа панă: «Вырăссем Одессăна тытса илсен, Крымри румын офицерĕсен шухăш-кăмăлĕсем питĕ начарланса кайрĕç. Ĕлĕкрех нумайĕшĕ Крым сурутравĕнчен мĕнле те пулсан тухса кайма май пулĕ тесе шанса тăнă. Одессăна вырăссем тытса илсен, эпир Крым танатпинчен тухса каяс шанчăксăр юлтăмăр. Нумай офицерсем тĕрлĕ сăлтавсем тупса Румынине яма ыйта пуçларĕç. Укçа парса тата ытти майсемпе те вĕсем врачсенчен хăйсем чирли çинчен калакан хутсем илме пуçларĕç. Румынсен 6-мĕш кавалери дивизийĕн штаб начальникĕ Славеску подполковник, румынсен 9-мĕш кавалери дивизийĕн штаб начальникĕ тата ыттисем те çавăн пек тунă. Вырăссем наступлени тăвас умĕн 3-мĕш горно-стрелковăй дивизийĕн командирĕ Мочульский генерал офицерсене фронтри лару-тăру çинчен каласа пачĕ. Хиня капитан генералтан çапла ыйтрĕ: «Эпир Крыма тытса тăрайăпăр-и, ăна хăвармалла пулмĕ-и?» терĕ. Янку капитан çапла ыйтрĕ: «Вырăссем татса кĕрсе кайсан, нимĕçсемпе румынсен çарĕсене Крымран илсе тухма май пулĕ-и?» терĕ. Генерал çиллĕнсе çапла каларĕ: «Çавăн пек ыйтусем эсир хăранине кăтартса параççĕ. Нимĕç командованийĕ Крыма пур майпа та хӳтĕлĕ. Эсир пĕлетĕр, кунта февраль уйăхĕнче кăна нимĕçсен 2 дивизийĕ килчĕ», терĕ. Генерал çапла калани офицерсене лăплантараймарĕ. Мочульский пятĕ качар генерал иккенне, вăл нимĕçсене юрасшăн кăна тăрăшнине пурте пĕлессĕ. Унтан пирĕн дивизие аркатса тăкрĕç те, вăл вара йăлтах пĕтсе ларчĕ».

* * *

Каменец-Подольск облаçĕнчи Белтородка ялĕнчи çынсем фашистла нимĕç ирсĕрĕсем тискер ĕçсем туни çинчен акт çырнă. Çав актра çапла каланă: «Февралĕн 23-мĕшĕнче пирĕн яла нимĕçсен отрячĕ килчĕ. Гитлеровецсем ялти пур çынсене те ялтан тухса кайма 10 минут хушшинче хатĕрленсе çитме хушрĕç. Салтаксем, килтен-киле çӳресе, çитĕннĕ çынсемпе ачасене вăйпа урама хăваласа кăларчĕç те килти чи хаклă япаласене пуçтарса илчĕç. Ялтан тухса кайма килĕшменнисене тата утма пултарайман старсемпе ачасене тата чирлисене фашистла ирсĕрсем пере-пере вĕлерчĕç. Гриньчук колхозница вĕсене çапла каларĕ: манăн 8 çулти ача Андрей чирлĕ, эпĕ ăна пĕччен хăварма пултараймастăп, терĕ. Нимĕçсем Гриньчук куçĕ умĕнчех вара унăн вырăн çинче выртса тăракан ачине персе вĕлерчĕç. Учительница Валентина Милевская хăйĕн чирлĕ амăшне пĕччен хăварма килĕшмерĕ. Фашистла ирсĕрсем Милевскаян икĕ ачипе тата унăн амăшне персе вĕлерчĕç. Çакăн хыççăн гитлеровецсенчен пĕри Милевская учительницăна хăйне те автоматпа персе вĕлерчĕ. Çынсене чугун çул станцине хăваласа кайсан, нимĕçсем вĕсене унта сарайне питĕрсе лартнă. Сарайне хупнă çынсем темиçе кун хушши апатсăр, шывсăр пурăннă. Ачасем нумайĕшĕ выçăпа вилнĕ. Хĕрлĕ Çарăн хăвăрт наступлени туса пыракан чаçĕсем ытти çынсене асапланса вилесрен çăлса хăварнă».

Акт çине Белгородка ялĕнчи çак çынсем алă пуснă: М. Семченко, Л. Наконечная, О. Яремчук, П. Воливач, И. Ратковский, И. Крачковский

Колхозниксемпе колхозницăсем, агрономсем, МТС-семпе совхозсенчи рабочисемпе работницăсем! Çуракине кăтартуллă ирттерер, колхозсемпе совхозсенче малта тăракан агротехникăна пурнăçа кĕртсе пырар! Тырпул тухăçлăхне ўстерер, пĕрчĕллĕ тырăсем тата ялхуçалăхĕн ытти культурисене ытларах туса илер! Фронтпа çĕршыва — апат-çимĕç, промышленноçа — чĕртавар ытларах туса парар! Сывă пулччăр совет хресченĕсем!

(1944 çулхи Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе ЦК ВКП(б) чĕнсе каланисенчен)

Йĕпрес МТС-не Пĕтĕм Союзри виççĕмĕш премие памалла тунă

ВЦСПС-па ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, МТС-сен 1943 çулхи Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухса, Йĕпрес МТС-не (директорĕ Г. И. Иванов, старши механикĕ П. М. Михайлов юлташсем) ăмăртура мала тухнăшăн виççĕмĕш преми памалла тунă.

МТС 1943 çулта трактор ĕçĕсен çулталăкри планне 117,1 процент, комбайнсемпе ĕçлемелли плана 197 процент тултарнă.

1943 çулхи тăваттăмĕш кварталта тракторсене юсамалли плана срокчен тултарнăшăн МТ Станцине ВЦСПС-па ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ Ялавне тата 20.000 тенкĕ преми панă.

Йĕпрес МТС-ĕн директорĕ Г. И. Иванов юлташ.

Ĕç кунĕпе туллин усă кураççĕ

ВĂРНАР. (Хамăр корр.). Мăнъял Хапăсри «Гигант» колхозра (председателĕ коммунист Г. Чернышов) çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа ирттерессишĕн ăмăрту вăйлăн сарăлса пырать. Пур бригадăсем те пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ. Виççĕмĕш кун ĕнтĕ колхоз ака сухи тăвать

Уйра ĕçлекенсем ĕç кунĕпе туллин усă кураççĕ. Вĕсем ирхипе ирех ĕçлеме тытăнаççĕ те каçхине тĕттĕм пулсан çеç таврăнаççĕ. Çапла вара кашни сухаçă кунта нормăна тултарать. 4-мĕш бригадăри ватă сухаçă Л. Герасимов малтанхи кунах 0,55 гектар, 5-мĕш бригадăра Варвара Кочанова — 0,50 гектар сухаларĕç.

Сураки ĕçĕ пуçланнă май, колхозра обществăллă столовăй уçăлчĕ. Унта кунне 3 хутчен çитереççĕ.

Вăйлă тырпул туса илессишĕн ырми-канми ĕçлĕпĕр

ЧКАЛОВСКОЕ, апрелĕн 26-мĕшĕ. (Телефонпа). Калинин облаçĕнчи Краснохолмски районри «Красный путиловец» ялхуçалăх артелĕн членĕсем вăйлă тырпулшăн кĕрешме чĕннине колхозниксемпе колхозницăсен аслă пухăвĕсенче тата митингсенче сўтсе-яваççĕ.

Юлашки икĕ кун хушшинче «Красный Октябрь», «Маяк», «Гвардеец», Молотов тата Роза Люксембург ячĕсемпе тăракан колхозсен членĕсем, çак пархатарлă пуçарăва ăшшăн йышăнса, конкретнăй обязательствăсем илчĕç.

Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем кашни гектартан вăтам шутпа 20 центнертан кая мар тĕштырă, 120 центнер çĕрулми, 6 центнер кантăр вăрлăхĕ туса илме шутлăчĕç. Çĕрулми вăрлăхĕ çителĕклĕ таранах хатĕрлес шутпа, 200 центнер çĕрулми тăрри касса хатĕрлеме пулчĕç. Суракине 10—12 кун хушшинче ирттерме йышăннă. Çак обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçлассишĕн колхоз Сталин ячĕпе тăракан колхоза ăмăртăва чĕнчĕ.

Молотов ячĕпе тăракан колхозра производство планне тунă, ăна колхозниксен аслă пухăвĕсенче сўтсе-явса çирĕплетнĕ. Бригадăсенче звеносем тунă, вăйлă тырпул туса илес енĕпе 12 звено ĕçлет.

Паянхи кун тĕлне тислĕк шĕвекĕпе, кĕлпе тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе 40 гектар çинчи кĕрхи калчасене апат панă. Акмалли çĕре лайăхрах çемĕçтерес тесе, колхозниксем çум пĕчĕк урапасемпе тислĕк турттараççĕ.

Сурхи тырăсене акмалли 23 гектара çумкурăксенчен, иртнĕ çулхи тулăмсемпе хăмăлсенчен тасатса çитерчĕ. Уйра халĕ хĕрўллĕ ĕç пырать. Уйхир ĕçне хутшăннă колхозниксем валли обществăллă столовăй çур. Унта вĕсем кунне икĕ хутчен апатланаççĕ. Ака вăхăтĕнчи ĕçе хĕрарăмсем йышлăн хутшăнаççĕ. Вĕсен ачисем площадкăра.

Вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе çамрăксемпе ватăсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Ватă колхозниксем — В. Богданова, Е. Богданов кашни гектартан 20 центнер сĕлĕ туса илме пулчĕç. Е. Наперсткинпа Ф. Наумов тулă акнă хирсенче ĕçлеççĕ, вĕсем кашни гектартан 20 центнер тулă илессишĕн кĕрешеççĕ. Ватă колхозник М. Кадкин вир туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен звенона ертсе пырать. Унăн звенин гектартан 19 центнер вир туса илес задача лартнă. Опытлă колхозник А. Галкин гектартан 15 центнертан кая мар пăрçа туса илме шутлать.

Халь районри пур колхозсенче те кĕрхи калчасене апатлантарма тытăннă. Паянхи кун тĕлне 300 гектар çинчи калчасене апатлантарнă.

С. НИКИТИН,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Малтанхи кунсенче

«Партизан» колхоз çуракине лайăх хатĕрленсе тухрĕ. Ут тавраш̆ĕсем çителĕклĕ, юсавлă. Лашасем пĕри те начар мар. Сухара пурĕ 50 лаша ĕçлет. Пĕррĕмĕш бригадăри конюхсем И. Матвеев, М. Иванова лашасене уйрăмах лайăх пăхнă. Çавăнпа ку бригадăри лашасем ытти бригадăрисенчен самăртарах.

Колхозри 5-мĕш бригада иртнĕ çулсенче начартарах ĕçленĕччĕ. Кăçал ку бригада (бригадирĕ Е. Егорова юлташ) суракине лайăх хатĕрленнĕ. Иртнĕ çулсенче кашни кун виçĕ плугпа çеç сухаланă пулсан, кăçал малтанхи кунрах 5 плугпа сухалама тытăнчĕ.

Кăçал, вăйлă тырпул туса илес тесе, вăрлăхсене икшер хут сортласа тасатнă, вĕсен шăтаслăхне икшер хут тĕрĕсленĕ. Вăрлăхсем аван. Вăрлăх участокĕсене чи лайăх вырăна тунă. Унта акмалли тулă вăрлăхне уйрăмах лайăх тасатнă. Тырăсене пур бригадăра та машинăсемпе акаççĕ.

Ака пахалăхĕ сухаçăсенчен килет. Çавăнпа та «Партизан» колхозра опытлă сухаçăсем — В. Алексеева, Е. Емельянова, А. Игнатьева, А. Андреев, Т. Михайлова юлташсем çамрăк сухаçăсене пулăшаççĕ. 5-мĕш бригадăри çамрăк сухаçăсем Иван Павлов, Петр Константинов малтанхи кунсенчех пĕрер гектар ытларах сухаланă. Çавăн пекех ытти бригадăсенче те чылай сухаçăсем нормăсене тултараççĕ.

Кăçал колхозăн пĕтĕмпе 206 гектар тĕштырă акса хăвармалла, вăл шутран оборона фончĕ валли 15 гектар акса хăварма палăртнă. Çапла вара кашни лашапа вăтам шутпа 6 гектар сухаламалла пулать. Лашасене 10—15 минут хушши канма тăратсан, утă çитереççĕ. Çакă вăл çуракинче лаша вăйĕпе туллин усă курма пулăшать.

Колхозниксен ĕç вăхăчĕпе туллин усă курас шутпа, сухаçăсем валли столовăй организациленĕ. Ирхи апатпа кăнтăрлахи апата уйрах çиеççĕ.

Агитаторсем малтанхи кунах сухаçăсем патне çĕнĕ хаçатсем илсе тухрĕç. Калинин облаçĕнчи Краснохолмски районри «Красный путиловец» колхоз колхозникĕсен чĕнĕвне вуласа ăнлантарса пачĕç. Çакăн хыççăн, сухаçăсемпе сўрĕсем, пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе, ĕç пахалăхĕшĕн тăрăшса ĕçлеме пулчĕç.

С. ШАДИН.

ЧУРАЧĂК (**Хамăр корр.**).

Ют çĕршывсенче

Швеци Германие шарикоподшипниксем парса тăни çинчен

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕрлешўллĕ Штатсемпе Великобританин Стокгольмри представителĕсем хăйсен правительствисен ячĕпе Швеци правительствинчен Германие шарикоподшипниксем яма чарăнма ыйтнă. Çав шарикоподшипниксемпе Германи хĕçпăшалсем тунă çĕрте усă курать, çав хĕçпăшалсемпе вара союзниксен хĕçпăшаллă вăйĕсене хирĕç тата граждăнла халăха хирĕç кĕрешет, çав хĕçпăшалсем вĕсем тата гитлеровецсене хăйсене пĕтĕмпех аркатса тăкас вăхăта тăсма май параççĕ.

Англипе Америка правительствисен çак утăмне ырласа йышăнни çинчен Совет правительстви те хăйĕн Стокгольмри совет миссийĕ урлă пĕлтернĕ.

АНГЛИПЕ ШВЕЦИ ХУШШИНЧИ ÇЫХĂНУСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: официально пĕлтернĕ тăрăх, Англипе Америка Швецирен Германие вăрçă валли чи кирлĕ япаласене ярса тăма чарăнма ыйтнă пулнă. Швеци çавна хирĕç ответ панă. Халĕ Лондонра Швеци ответне тĕплĕн пăхса тухаççĕ. Анчах та çакна каламасăр хăварма çук: Швеци ответĕ Англипе Америка ыйтнине Швеци пурнăçа кĕртме килĕшменнине пĕлтерет.

Хэлл пресс-конференцире калани

ВАШИНГТОН, апрелĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Пресс-конференцире США-н государствăннăй секретарьне ыйтусем панă. США Швецирен Германие шарикоподшипниксем ярса тăмашкăн чарăнма ыйтнă. Швеци США ыйтнине пурнăçа кĕртме килĕшмен. Çакăн пирки панă ыйтăва хирĕç Хэлл çапла каланă: Швеци панă ответ кăмăла каймасть, США правительстви Швеци отвечĕпе çырлахма пултараймасть, мĕншĕн тесен Пĕрлешўллĕ Штатсем çак ыйтăва питĕ пысăка хураççĕ, тенĕ. Анчах та Хэлл Америка правительстви кун пирки малалла мĕн тума шутлани çинчен нимĕн те каласа паман.

Хэлла тата çакăн пек ыйту панă: Финлянди Совет Союзĕн мир пирки панă условийĕсене йышăнман. Çакăн пирки Америка правительстви дипломати тĕлĕшпе мĕн те пулин тума шухăшлать-и, сăмахран, Финляндипе çыхăну тытма пăрахма шутламасть-и? — тенĕ. Хэлл ку ыйтăва хирĕç ответ паман.

ШВЕЦИН ЮТ ÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН МИНИСТЕРСТВИ ПĔЛТЕРНИ

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ирхине тухнă пур хаçатсенче те çакăн пек пĕлтерў пичетленĕ: «Швецин ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви çакăн çинчен пĕлтерет: Швеци урлă почта сўретнĕ чухне Германие халиччен парса тăнă çăмăллăхсене хальхи вăхăтра майĕçчен пĕтерсе пыраççĕ. Нимĕçсем хăйсемех ăсатса сўрекен вагонсене халь сўреме чарнă. Çавăн пек вагонсем Швеци урлă юлашки хут апрелĕн 29-мĕшĕнче каяççĕ. Малашне Швеци урлă яракан почтăна Швецин почта ведомстви хăй ăсатма пуçлать».

ДАНИРЕ ЧРЕЗВЫЧАЙНĂЙ ПОЛОЖЕНИ ТУСА ХУНĂ

ЛОНДОН, апрелĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Стокгольмри корреспонденчĕ Томас Гаррис Данири пресс-бюровĕн çак пĕлтерĕвĕ çинчен çырса пĕлтерет: иртнĕ каç çĕнĕрен саботажла ĕçсем тунă пирки Германин çар влаçĕсем пĕтĕм Данийĕпех чрезвычайнăй положени туса хунă. Копенгаген урамĕсенче нимĕç салтакĕсем патруллесе сўреççĕ. Вĕсене пулăшма танксем уйăрса хунă. Столицăри стратегиллĕ паха вырăнсенче пулеметсем вырнаçтарса лартнă. Хăшпĕр тĕлте пăшалсемпе пени илтĕннĕ.

Стокгольмри «Афтонбладет» хаçат пĕлтернĕ тăрăх (вăл лайăх пĕлсе тăракан çынсем каланă тăрăх пĕлтерет), нимĕçсем Дание ытти çĕршывсемпе çыхăнма памасăр уйăрса хума йышăнни пĕр эрне çитет ĕнтĕ.

АНКАРАНА АНГЛИН ÇАР МИССИЙĔ ПЫНĂ

ЛОНДОН, апрелĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лондонра паян çакна çирĕплетсе панă: Анкара хулине Англин çар миссийĕ пынă, вăл Турци правительствин представителĕсемпе çĕнĕрен калаçма пуçланă. Англипе Турци вăрçă тĕлĕшпе тепĕр хут калаçма пуçлани Турци правительстви Германие хром парса тăма пăрахнипе пĕр вăхăтра килчĕ.

Англин штаб офицерĕсемпе Турцин генеральнăй штабĕн офицерĕсем Черчилль премьер-министрпа Турцин государство деятелĕсем Каирта тĕл пулса калаçнă хыççăн канашлама пуçланă, анчах та пилĕк эрне калаçни усăсăр пулнă пирки ун чухне мисси февраль уйăхĕн пуçламăшĕнче Каира таврăннă.

АНГЛИРЕН ТУХСА КАЯССИНЕ ЧАКАРНĂ

ЛОНДОН, апрелĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Англин шалти ĕçсемпе шалти хăрушсăрлăх министерстви ĕнер çакăн пек заявлени пичетлесе кăларнă: вăрçă пынă пирки, Ирландипе каяссине чакарнипе пĕрлех халь Англирен кирек ăçта каяссине те чакарнă. Тинĕс урлă сўреме чарнă. Государствăн васкавлă ĕçĕпе каймалла пулсан çеç тинĕс урлă кайма юрать. Англирен тухса кайма ирĕк илнĕ çынсем Англирен апрелĕн 27-мĕшĕнчи 24 сехетчен тухса кайма пултараççĕ.

Заявленире çапла каланă: Англирен тухса каяссине çакăн пек чакарни вăл вăхăтлăх япала пулса тăрать, вăрçăри лару-тăру май парсанах ăна пăрахăçа кăлараççĕ.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтернĕ: Англи бомбардировщикĕсен питĕ пысăк соединенийĕсем апрелĕн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Германие тата вăл оккупациленĕ территорие тапăннă. Пуринчен ытларах Эссен хулине тапăннă.

Апрелĕн 26-мĕшĕнче ирпе кас союзниксен самолечĕсем Францири тата Бельгири çар объекчĕсене тапăннă.

Англин авиаци министерстви çапла пĕлтернĕ: апрелĕн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Эссена, Швейнфурта тата Париж çывăхĕнчи Вильнов—Сен—Жоржа тапăннă çĕре Англин 1000 бомбардировщикĕ ытла хутшăннă. Швейнфурт хулине пуринчен те вăйлăрах тапăннă. «Москито» йышши самолетсем Гамбурга тапăннă.

Америкăн Европăри хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтернĕ: Америка авиацийĕ апрелĕн 26-мĕшĕнче Брауншвейг районĕнчи промышленность объекчĕсене тапăннă. Американецсен пĕр бомбардировщикĕ те пĕтмен тата вĕсем Германин пĕр истребительне те тĕл пулман

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: фронтăн Адриатика участокĕнче союзниксен çарĕсем тăшмана икĕ пысăках мар атакине сирсе янă. Фронтăн ытти участокĕсенче союзниксен патрулĕсем кĕрешнĕ тата артиллери персе тăнă.

Черчилль калани

ЛОНДОН, апрелĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин премьер-министрĕ Черчилль общинăсен палатинче хăйне панă ыйтусем çине ответлесе çапла каланă:

«Грецире политикăллă хирĕçўсене пĕтерсе лартас тесе, Греци королĕ йышлăрах представительсем кĕрекен правительство тума шутлани çинчен пĕлтерчĕ, çав правительствăна Грецири патриотла пур ушкăнсен представителĕсем те кĕмелле, унта хăйĕн халăхне хирĕç тăшманпа пĕрле пулса кĕрешнисене çеç кĕртмелле мар. Англи правительстви çак политикăпа килĕшет, вăл Греци корольне çав политикăна пурнăçа кĕртме пур майпа та пулăшĕ».

Лейборист Паркер çапла ыйтнă: çав правительство тăшмана хирĕç кĕрешекен Греци халăхĕн интересĕсене туллирех палăртса тăтăр тесе, премьер-министр пур майпа та тăрăшĕ-и, Греци халăхĕ Георг короле хирĕç пынă вăхăтрах Грецире Георг короле лартма хăтланмĕç тесе Греци халăхне шантарса калама пултарать-и? — тенĕ. Черчилль çапла каланă: «Грецин пулас пурнăçĕ çинчен темиçе хут та каланă ĕнтĕ: Грецире яланхи пек условисем пулса тăрсанах эпир Греци халăхне мĕн те пулсан йышăнтарма тăрăшас çук», тенĕ.

ГРЕЦИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ОТСТАВКĂНА ТУХНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Каиртан çапла пĕлтерет: апрелĕн 26-мĕшĕнче каçхине Греци правительстви хăйĕн пуçĕнче тăракан Софоклес Венизелоспа пĕрле отставкăна тухнă. Папандреуна король çĕнĕ правительство тума хушнă.

ФРАНЦУЗ ХАЛĂХНЕ ИРĔКЕ КĂЛАРАССИШĔН КĔРЕШЕКЕН КОМИТЕТ ФРАНЦИРЕ ГРАЖДАНЛА ВЛАСТЬ ОРГАНИЗАЦИЛЕССИ ÇИНЧЕН ЙЫШĂННĂ ДЕКРЕТ

АЛЖИР, апрелĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Француз халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен комитет Францие ирĕке кăларнă хыççăн унта граждăнла власть организацилесси çинчен декрет пичетлесе кăларнă:

«Француз халăхĕ хăйĕн пулас учрежденийĕсене мĕнле тумаллине хăй кăтартса парĕ. Çак ĕçе тума нацин учредительнăй ассамблейине пухĕç, ăна Францири лару-тăру суйлавсем туса ирттерме май парсанах — Франци территорине ирĕке кăларнă хыççăн пĕр çул хушшинче туса ирттермелле. Ассамблейăна çитĕннĕ французсемпе француз хĕрарăмĕсем пурте, пур çĕрте те тўррĕн тата вăрттăн сасăласа суйлĕç, суйлава закон тăрăх суйлав прависĕр хăварнă çынсем çеç хутшăнмĕç».

Нацин учредительнăй ассамблейине пухиччен республика учрежденийĕсене майĕпен пĕрин хыççăн теприне уçса пырĕç. Декретра çак задачăна пурнăçламашкăн мĕнле-мĕнле ĕçсем тумаллине кăтартса панă.

ГИТЛЕРЛА ОККУПАНТСЕМ 120 ПАЛЛĂ ЭСТОНЕЦА ТЫТСА ХУПНĂ

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Швецире тухакан «Нюэ даглигт аллехандa» хаçат çапла пĕлтерет: Таллинран илнĕ хыпарсем тăрăх, иртнĕ эрне вĕçĕнче гитлеровецсем 120 паллă эстонеца тытса хупнă. Тытса хупнисем хушшинче паллă ученăйсем те чылай.

Тăван çĕршывăн аслă полководецĕсем

Михаил Кутузов

Кутузовăн чапне Пушкин «таса чап» тесе ят панă. Отечественнăй вăрçă пулнă çула — 1812-мĕш çула та — вăл çав сăмахпах палăртса панă. Халăхăн Тăван çĕршывшăн пынă кĕрешĕвне истори Кутузовăн чаплă ĕçĕсемпе таччăн çыхăнтарнă. Михаил Илларионович французсен Наполеон ертсе пыракан çарĕн нумай хăватлă, унччен никама та парăнман вăйĕсене хирĕç кĕрешес ĕçе ертсе пынă. Вăл вырăссен çарне сыхласа хăварнă, тăван халăха чуралăха кĕрсе ўкесрен çăлса хăварнă, вăрçăра чи вăйлă тăшмана аркатса тăкнă.

Кутузов Суворовăн юратнă вĕренекенĕ тата юлташĕ пулнă, вăл XVIII-мĕш ĕмĕрти вăрçăсенче пысăкнĕ командир пулнă, 1790-мĕш çулта вăл Измаил крепоçне штурмланă çĕрте пулнă. 1805-мĕш çулхи йывăр кунсенче Наполеона хирĕç çапăçнă. Кутузов çара ертсе пырас ĕçе питех те йывăр тапхăрта йышăннă. Тăшман пирĕн çĕршыва нумай шала кĕрсе кайнă пулнă. Августăн 19-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле вырăссен çарĕсем çунакан Смоленскран тухса кайнă.

Вырăссен командованийĕ умĕнче стратегиллĕ питех те йывăр задача тăнă. Пирĕнннччен нумай йышлăрах тăшмана, питĕ лайăх хĕçпăшалланнă тăшмана, хăй пăхăнтарнă пĕтĕм Европăри халăхсемпе тата производство ресурсĕсемпе усă куракан тăшмана, вырăссен çĕрне темиçе çĕр километр шала кĕрсе кайнă тăшмана, авалхи столица патне — Мускав патне хăвăлăн пыракан тăшмана çĕнтермелле пулнă. Наполеона çĕнтермелле пулнă!

Вăрçă пирĕншĕн шанчăксăр пек туйăнма пултарнă. Анчах та Кутузов «йышпа мар, пĕлнипе çапăçмаллине» пĕлсе тăнă. Вăл тăшманăн планĕсене тавçăрса илнĕ, вĕсене хирĕç урăх плансем тунă.

Главнокомандующи малтан каялла чакас тактикăна тытса пынă. Çав тактика вăл ун чухнехи условисенче пĕртен-пĕр тĕрĕс тактика, кирлĕ тактика пулнă. Кутузов хаяр çапăçусенчен пăрăнса пынă, вырăссемпе французсен вăйĕсем урăхла шайлашассине, Наполеона татăклăн пырса çапма май килсе тухассине ăслăн кĕтсе тăнă. Бородинора пулса иртнĕ çапăçу (вăл Кутузовăн çĕршыв умĕнче тунă питĕ паха ĕçĕ пулса тăнă) малтанах тĕплĕн шутласа тунă ĕç пулса тăрать. Халĕ çав çапăçу мĕнле пынине тата главнокомандующи панă приказсене тĕпчекенсем Кутузов тăшман мĕн шухăшланине вĕçне çитиех курса тăнине тата вăл Бонапарт планĕн пĕлтерĕшне тĕплĕн ăнланса илнине кураççĕ.

Кутузов оборонăра тăрса çапăçнă, анчах çапăçу часах наступлениллĕ çапăçу пулса кайма пултарнă. Малтанах Наполеон хăйĕн тĕп вăйĕсене вырăссен сулахай флангне хирĕç пухса тăратнă, вăл вырăссен сулахай флангĕнчен иртсе кайса, вырăссен çарне хыçран пырса çапасшăн пулнă. Хăйĕн чи лайăх маршалĕсене — Даву, Ней, Мюрат маршалсене — вăл Багратион çарĕсен хирти тĕреклетнĕ вырăнĕсене хирĕç янă. Çав вăхăтрах французсем вырăссене çавăрса илмелли операци тунă. Вĕсем хаяррăн çапăçнă хыççăн çав тĕреклетнĕ вырăнсене тытса илнĕ, анчах та çакă вĕсене хăйсем кĕтнĕ результатсене паман. Кутузов мĕн пулассине малтанах пĕлсе тăнă. Çавăнпа та вăл вырăссен сулахай флангĕн чи хĕррине Тучков генералăн корпусне тăратнă. Çав корпус вара французсен Понятовский ертсе пыракан чăсĕсене флангран иртсе кайма чарса тăнă.

Кун хыççăн Наполеон, хăйĕн планне улăштарса, вырăссен вăта çĕрте тăракан çарĕсене аркатма тытăннă. Вăл вăта çĕрти оборонăна татса кĕрсе, унта вăйлă резервсене кĕртсе яма, çапла вара вырăссене аркатса тăкма шутланă (çак ĕç валли вăл хăйĕн гвардине çалăçава кĕртмесĕр упраса тăнă). Франци императорĕ, оборонăн вăта çĕрĕнчи Раевскин «Курганная батарея» текен батарейине тытса илнĕ пулин те, оборонăна татса кĕме пултарайман. Кутузов хушнă тăрăх, оборонăна татса кĕме пикенекенсене хирĕç кĕрешме вырăссен сылтăм флангĕнчен çĕнĕ те çĕнĕ вăйсем пырса тăнă. Çакна пула вара французсен планĕсем путланса тарнă.

Наполеон хĕвел аннă чухне позицисене тăхма тухса кайнă. Вăл хăйĕн умĕнче çĕнтерў мар, юн тинĕсĕ çеç выртнине лайăх курнă. Унăн пĕтĕм вăрçă шухăшĕсене вырăссен полководецĕ малтанах курса тăрса аркатса тăкнă. Кайран, хăй Святая Елена утравĕ çинче пурăннă чухне, Наполеон çапла çырнă: «Эпĕ ирттернĕ çапăçусенчен чи хăрушши вăл — Мускав патĕнче пулса иртнĕ çапăçу. Çав çапăçура французсем хăйсене хăйсем тăшмана çĕнтерме тивĕçлĕ çарсем пек кăтартрĕç, вырăссем вара хăйсене никам çĕнтерес çук çарсем пек кăтартрĕç».

Бородино патĕнче пулса иртнĕ çапăçура французсен çарне вĕлермеллех суранлатнă. Наполеон Мускавра пулнă чухне Кутузов малтанах курса тăнă тепĕр ĕç те пурнăçа кĕнĕ: «аслă çарăн» наступленийĕ тăвас хăвачĕ пĕтсе çитнĕ, вара вăл каялла чакма пуçланă. Пирĕн полководец çавăн пек улшăну пуласса кĕтсе тăнă та, Кутузов питех те чаплă «марш-маневр» тунă та вырăссен çарĕсене тăшман флангне илсе тухнă. Малтанах вăл тăшмана Рязань çулĕпе куçса пынă пек туса улталанă. Наполеонăн маршалĕсем икĕ эрне хушши вырăссен Рязань еннелле куçакан çарне хыçран хăваласа пынă. Тĕрĕссипе илсен, унта вырăссен çарĕ мар, пурĕ те икĕ полк çеç. Михаил Илларионович Наполеона Красная Пахра ялĕ патĕнче те улталанă. Ун чухне вăл хăйĕн çулне кĕтмен çĕртен улăштарнă та, кăнтăралла куçса, Калуга çулне йышăнса илнĕ. Тарутинăпа Малоярославец патĕнче пулнă çапăçусем хыççăн вара Наполеонăн хăй ишĕлтернĕ Смоленск çулĕ çинех тухмалла пулнă.

Француз çарĕ «каялла чакни» вăл пĕтĕмпех арканса каяссине пĕлтернĕ. Пирĕн çĕршывра халăх вăрçи нихăçан пулман вăйпа сарăлса пынă. Вырăс çарĕсем хĕссе пыни, партизансем пыра-пыра çапни тата сивĕпе выçлăх, чир-чĕрсем сарăлни — французсен юлашки вăйĕсене те хавшатса, пĕтерсе пынă. Наполеон Россие 575 пин çынлă çарпа килсе кĕнĕ. Мускавран вăл 110 пин çын çеç илсе тухнă. Смоленск патне 60 пин çын çитнĕ. Россия чикки патне вара «аслă çарăн» юлашкийĕсем 30 пин салтак çеç çитнĕ.

Наполеон 1812-мĕш çулхи декабрĕн 6-мĕшĕнче çав çарсене пăрахнă та васкаса Парижа тухса кайнă.

Михаил Кутузов тунă аслă ĕç — Тăван çĕршыва ирĕксĕрлеме килнĕ тăшмантан хўтĕлесе хăварни — пĕтĕм тĕнчешĕн те историллĕ паллă ĕç пулса тăнă. 1812 çулхи вăрçă Европăри халăхсене ирĕке тухассишĕн кĕрешме çĕкленме чĕнекен паллă пулса тăнă.

Оборонăра тăрса хăйĕнчен йышлăрах тăшмана халтан яраси, çав вăхăтрах хирĕç вăйлăн пырса çапма вăйсем хатĕрлесси, вăйлăн пырса çапса тăшмана пĕтерсе тăкасси, — çаксем пулаççĕ Кутузовăн вăрçă шухăшĕсем.

Çавăн пек шухăшсемпе паларса тăрать ĕнтĕ Кутузов орденĕн статучĕ те. Хĕрлĕ Çар командирĕ çав ордена «тăшманăн йышлăрах вăйĕсене хирĕç кĕрешес ĕçре пысăк соединенисен операцийĕсене пĕлсе организациленĕшĕн, тăшман çарĕсене халтан янăшăн, унăн çыннисемпе техникине пĕтернĕшĕн... тăшманăн йышлăрах вăйĕсем тапăнса пынине хирĕç тăрас ĕçре çав тери хастарлă пулнăшăн, хĕçпăшалсемпе персе тăрассине тĕрĕс йĕркелесе, вырăнсемпе усă курса, çуран çарсемпе, танксемпе, авиаципе усă курса, тăшмана хирĕç пыра-пыра çапса, йышăнса тăракан позицине алăра тытса тăнăшăн тата ун хыççăн татăклăнах ăнăçлă наступлени пуçласа янăшăн» илет.

Кутузов орденĕн варринче — ялкăшакан Хĕрлĕ Çăлтăрлă Кремль башнин кĕмĕл ĕмĕлки çинче — фельдмаршалăн ыттăнтан тунă сăнĕ курăнать. Иртнĕ тапхăр хальхипе çыхăнать. Халăхăн иртнĕ вăхăтсенчи геройла ĕçĕсене аса илни — хăватлă хĕçпăшал пулса тăрать. Çав хĕçпăшал патриотсене, пирĕн Тăван çĕршывăн шанчăклă ывăлĕсене тăшмана пĕтерсе пыма пулăшать.

Профессор М. НЕЧКИНА.

Ответлă редакторăн ĕçĕсене тăваканĕ **П. Н. НИКОЛАЕВ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 02422 Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз